чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

247 /26402/№ Эрне кун, 2013, раштав (декабрь), 27 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Олимп çулăмĕ чуна хĕмлентерĕ

***Паян Чăваш Енре савăнăçлă уяв – Олимп çулăмĕн эстафети. Çавна май ĕнер Правительство çуртĕнче пĕтĕмлетӳ пресс-конференцийĕ иртрĕ.***

Унта ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, эстафета партнерĕсен представителĕсем тата ыттисем хутшăнчĕç. Вĕсем мероприятие епле хатĕрленни çинчен, уяв программин тытăмĕпе, эрне кунхи уйрăмлăхсемпе çĕнĕлĕхсем пирки аса илтерчĕç, журналистсен ыйтăвĕсене хуравларĕç.

«Чăваш Ен спортсменĕсем çĕр-шыв тата тĕнче спорчĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывнă. Пирĕн ентешсем Олимп вăййисене 1952 çултанпа хутшăнаççĕ. Пурĕ 40 ытла спортсмен Олимп тӳпине хăпарма тивĕçнĕ. Ардалион Игнатьев çăмăл атлета, Ирина Калентьевăпа Валерий Ярды велосипедистсене, Владимир Воронков йĕлтĕрçе, Елена Николаевăпа Олимпиада Ивановăна, Владимир Андреев хăвăрт утакансене, Валентина Егоровăпа Татьяна Архипова марафонçăсене пĕтĕм тĕнче пĕлет. Юлашки çул пирĕн республикăра спорта аталантарас тĕллевпе чылай ĕç пурнăçланă: кашни районта физкультурăпа спорт керменĕсем ĕçлеççĕ, çĕнĕ объектсем çĕкленеççĕ. Шупашкарта кашни çул çĕр-шыв чемпионачĕсемпе кубокĕсем иртеççĕ, çавăн пекех пире тĕнче тата Европа шайĕнчи ăмăртусене йĕркелеме шанаççĕ. Олимп çулăмĕн эстафети те Чăваш Ен çыннисемшĕн асра юлмалли уяв пуласса, çамрăксене спортпа туслашма хавхалантарасса шанатăп», – терĕ Иван Моторин.

«Ингосстрах» компанин Шупашкарти филиалĕн директорĕ Наталия Сергеева Чăваш Ене Олимп çулăмĕн чашăкне парнелерĕ. Ăна паян «Олимпийский» стадионта чĕртĕç, 40 килограмм таяканскере /ăна тимĕртен ăсталанă/ уяв хыççăн унтах упрама хăварĕç, вăл пире уява аса илтерекен символ пулĕ. Çулăм чашăкне чĕртме Олимп вăййисен чемпионне, СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерне Владимир Воронкова шаннă. Пресс-конференцие хутшăннăскер çак хисепе тивĕçнĕшĕн савăннине пĕлтерчĕ. «Олимп вăййисен стартне тухнă чухне те çакнашкал хумханман, çав тери яваплă самант вăл маншăн. Хама тепĕр хут Олимпиадăна хутшăнас пекех туятăп», – терĕ пирĕн ентеш куççульне шăлса.

Шупашкар урамĕпе çулăма çĕр-шыври паллă спортсменка, «Раççей-2» телеканалăн комментаторĕ Ольга Богословская та йăтĕ. Мĕншĕн Чăваш Ене суйласа илнĕ-ха тĕнче чемпионки? «Чăваш Республикинче эпĕ темиçе хут та пулнă, тĕрлĕ ăмăрту еплерех иртни çинчен телерепортажсем хатĕрленĕ. Çавăнпа Шупашкара килме сĕнсен тӳрех килĕшрĕм. Кунта ăмăртусемпе уявсем хăйне евĕрлĕ иртеççĕ, çыннисем хастар та тăрăшуллă. Хăнасемпе спортсменсене кĕтсе илме, хавхалантарма пĕлеççĕ», – пулчĕ хурав.

Паян Олимп вăййисен тĕп паллине Чăваш Ене Чĕмпĕртен пуйăспа илсе килĕç. Чукун çул станцийĕн пуçлăхĕ Владимир Никифоров пĕлтернĕ тăрăх – çулăм Шупашкара Хусан чукун çулĕпе килекен виççĕмĕш хула пулĕ. Олимп çулăмĕ пĕрремĕш хут чукун çулпа Владивостокран тухнă, çавăнтан пуçласа вăл пурĕ 17700 çухрăма парăнтарĕ. Пуйăспах Мари Республикине çитĕ.

**Андрей МИХАЙЛОВ**

## Вĕсем – чи лайăххисем

***ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер «Чăваш Республикин патшалăхăн чи лайăх граждан служащийĕ» тата «Чăваш Республикин муниципалитетăн чи лайăх служащийĕ» конкурсĕсен çĕнтерӳçисене чыслама хутшăннă.***

Вĕсене саламланă май Михаил Васильевич патшалăх тата муниципалитет служащийĕсем республикăн ăнăçлă аталанăвне хывакан тӳпе пысăккине, вĕсем Чăваш Енре пурăнакансен умĕнче яваплă пулнине палăртнă.

Республика Пуçлăхĕ конкурс çĕнтерӳçисене Дипломсемпе призсем панă. Патшалăхăн чи лайăх граждан служащийĕн ятне Вĕренӳ министерствин пай пуçлăхĕ Тамара Возняк тивĕçнĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствин пай пуçлăхĕ Марина Николаева, виççĕмĕшĕнче – Сывлăх сыхлав министерствин пай пуçлăхĕ Кирилл Милюхин.

Район, хула округĕн муниципалитет служащийĕсен тупăшăвĕнче Ольга Степанова /Шупашкар райадминистрацийĕ/, Алла Николаева /тĕп хула мэрийĕ/, Лилия Никифорова /Элĕк райадминистрацийĕ/ тата Лилия Тарасова /Муркаш райадминистрацийĕ/ мала тухнă. Хула /ял/ тăрăхĕсен муниципалитет служащийĕсен хушшинче Юрий Блинов /Елчĕк районĕнчи Елчĕк ял тăрăхĕ/, Наталья Ефимова /Пăрачкав районĕнчи Пăрачкав ял тăрăхĕ/, Альбина Наумова /Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар ял тăрăхĕ/ тата Роза Афанасьева /Комсомольски районĕнчи Тукай ял тăрăхĕ/ палăрнă.

**Н.ВАСИЛЬЕВ**

## Саламлатăп

**Чăваш Енĕн çăлав службин хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Эсир çĕр çинче пуринчен те хаклине – çын пурнăçне – çăлса хăварассипе çыхăннă пархатарлă миссие хăш чухне хăвăр ума тухса тăракан пысăк хăрушлăхсене те шута илмесĕр пурнăçлатăр. Майсăр лару-турăра – пушарта, шыв çинчи инкекре, аварире, çурт ишĕлчĕкĕсен вырăнĕнче тата пысăк ытти инкек пулнă çĕрте эсир чи малтан пулăшу паратăр.

Çăлав службисен кал-кал пурнăçлакан ĕçне пула кăçал кăна 1900 ытла çын пурнăçне çăлнă. Пушарта 536 миллион тенкĕлĕх таварпа пурлăха упраса хăварнă.

Хăюлăхпа паттăрлăх, тимлĕх тата çын нушине çывăха илни – аварипе çăлав тата пушар хуралĕн службинче, Чăваш Ен халăхне граждан хӳтлĕхĕ парас сферăри ятарлă ытти ушкăнра вăй хуракансен тĕп пахалăхĕсем.

Тӳрĕ кăмăлпа тăвакан ĕçĕршĕн, чăтăмлă пулнăшăн тата тивĕçе парăннăшăн чунран тав тăватăп. Çирĕп сывлăх, ырлăхпа телей, кăткăс та яваплă ĕçĕрте çитĕнӳсем сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

## Тĕп вырăнта – хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси




***Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев патшалăхăн чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттаракан тата унăн сиенне пĕтерекен пĕрлехи тытăмĕн Чăваш Республикинчи территорири çум тытăмĕн 2013 çулхи ĕç-хĕлне пĕтĕмлетес енĕпе йĕркеленĕ вĕренӳпе методика ларăвне хутшăнчĕ.***

Малтанах Михаил Васильевич Шупашкар гарнизонĕн техникипе тата ЧР Министрсен Кабинечĕн управленин куçса çӳрекен пункчĕпе паллашрĕ. Аса илтеретпĕр: кăçал пирĕн республикăна аварипе çăлав службисем валли ĕçре усă курмашкăн управленин куçса çӳрекен хальхи йышши пунктне /ППУ/ илсе килнĕ. Вăл подразделенисене чрезвычайлă лару-тăру пулнă вырăнтах васкавлă йышăну тума, республикăн кирек хăш кĕтесĕнче те видеоçыхăну йĕркелеме май парать, синкер сиенĕсене пĕтерес ĕçе çăмăллатать. Михаил Игнатьев ППУна, çĕнĕ йышши автоцистернăсене, гидравлика аварипе çăлав хатĕрĕсемпе пуянлатнă автомобильсене, гидроциклсене тата ытти техникăна пăхса çаврăнчĕ, вĕсемпе ĕçлекен çынсемпе калаçрĕ. Унтан республика Пуçлăхĕ ЧР Правительствин çуртĕнче йĕркеленĕ кураври япаласене – унта пушарнăйсен, водолазсен, çăлавçăсен хатĕрĕсемпе тумтирĕ те пурччĕ – кăсăкланса сăнарĕ.

– Тĕрлĕ шайри влаç органĕсемшĕн халăха хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессин ыйтăвĕсем приоритетлă шутланаççĕ, патшалăх политики те çакăнпах çыхăннă, – терĕ Михаил Игнатьев ларăва уçнă май. Вăл аварипе çăлав службисен пурлăхпа техника никĕсне çулсеренех пуянлатса пынине, çавна май чылай инкеке вăхăтра сирме май килнине палăртрĕ. 2010 çулта вăрман пушарĕсем алхаснине, кăçал республикăра чрезвычайлă лару-тăру темиçе хут пулнине, йывăр çак тапхăрсенче влаç органĕсем тата яваплă ытти служба хăйсен тивĕçне тăрăшса пурнăçланине, çавна май сиен калăпăшĕ пысăках пулманнине каларĕ. Раççей Федерацийĕнче чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттаракан тата çут çанталăк сиенĕсене пĕтерекен хальхи йышши тытăм 20 çул ытла ăнăçлă ĕçленине пĕлтерчĕ.

– Çăлав службин тĕп пуянлăхĕ – унта ĕçлекен çынсем. Вĕсем – чăн-чăн профессионалсем. Çын сывлăхĕпе пурнăçне çăлса хăварасси, инкеке сирсе ярасси тата сиен витĕмне чакарасси вĕсен ăсталăхĕнчен нумай килет. Эпĕ сире Çăлавçă кунĕ ячĕпе саламлатăп, хăвăр тивĕçе чунпа парăннăшăн, чăтăмлăхăршăн тав тăватăп. Яваплă та кăткăс ĕçĕрте ăнăçу сунатăп, – терĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

Унтан вăл чи лайăх сотрудниксене Чăваш Республикин патшалăх наградисемпе чысларĕ. Республика территорийĕнчи чрезвычайлă лару-тăрăва сирес тата унăн сиенĕсене пĕтерес тытăмри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Антонов «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медальне илме тивĕçнĕ.

Чыслав хыççăн С.Антонов РСЧС çум тытăмĕн кăçалхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа кăтартрĕ, 2014 çул тĕллевĕсемпе паллаштарчĕ. Кăçал пирĕн республикăра 8 синкер пулнă, вĕсенчен 2-шĕ – техногенлă, 6-шĕ – çут çанталăк синкерĕ. Юлашкинчен асăннисем этем айăпĕпе çыхăнман: ейӳ вăхăтĕнче Улатăр хулинчи çуртсем патне шыв çитни, çанталăк шăрăх тăнăран ЧР Правительствин комиссийĕ малтан республикăн кăнтăр районĕсенче, унтан вара Чăваш Енре чрезвычайлă лару-тăру тесе пĕлтерни. Кăçал раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне 1011 пушар тухнă /пĕлтĕр – 1053/. Çын вилесси те кăштах чакнă: кăçал – 91, пĕлтĕр 96 пулнă. 97-ĕн суранланнă /117/. «Хĕрлĕ автан» ытларах пурăнмалли секторта алхаснă – 77%, унта вилнисен йышĕ те пысăк – 93%. Пушар тухасси Патăрьел, Куславкка, Красноармейски тата ытти районта ӳснĕ.

ЧР строительство министрĕ Олег Марков министерство никĕсĕ çинче йĕркеленĕ аварипе çăлав службисен ĕçĕ-хĕлĕ, Чăваш Ен ГКЧС председателĕ Вениамин Петров Чăваш Ен служби 20 çул тултарни пирки доклад турĕç.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

## Владимир Путин саламланă

Раççей Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева Çĕнĕ çул тата Раштав ячĕпе саламланă.

«Çутă та кĕтнĕ çак уявсем пире пĕрлехи шанчăкпа, ĕмĕтсемпе тата ăнтăлупа пĕрлештереççĕ. Телейпе асамлăх сывлăшне кӳреççĕ. Çитес çул ырă хыпарсем илсе килтĕр, пултаруллă та мирлĕ ĕç савăнăçĕпе тулли пултăр – çакна чун-чĕререн шанатпăр. Палăртса хуни пĕтĕмпех пурнăçлантăр. Сире çитĕнӳсем, сывлăх тата ыррине кăна сунатăп», – тенĕ саламра.

**К.АЛЕКСАНДРОВА.**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Пичет ĕçченĕсем валли – семинар

***ЧР Наци библиотекинче массăллă информаци хатĕрĕсен ертӳçисемпе специалисчĕсем валли вĕренӳ семинарĕ иртнĕ.***

Малтанхи кун тĕп редакторсемпе журналистсене, калăплавçăсемпе сайт редакторĕсене Мускав патшалăх пичет институчĕн доценчĕсем Татьяна Шкварцовăпа Валерий Перевалов хальхи чĕлхе нормисемпе тата пичетре тĕл пулакан йăнăшсемпе паллаштарнă, хаçата илĕртӳллĕрех тăвас уйрăмлăхсене тата электрон кăларăмсен хăйне евĕрлĕхĕсене çутатса панă. Семинарăн иккĕмĕш кунĕнче практика занятийĕсем иртнĕ. Унта пичет ĕçченĕсем ЧР вĕренӳ институчĕн доценчĕпе Юрий Виноградовпа тата вĕренӳ центрĕн директорĕпе Ольга Салтыковăпа пĕрле çыру чĕлхин çитменлĕхĕсене тишкернĕ, тĕрлĕ хăнăхтару пурнăçланă.

**А.АНДРИЯНОВ.**

### Нумай пурăнакансем – Юхмапа Пăла тăрăхĕнче

***Патăрьел районĕ вăрăм ĕмĕрлĕ ватă йышлипе палăрать. Тăхăр теçетке çула хыçа хăварнисем кунта – 177 çын.***

Вĕсенчен 60-шĕ кăçал 90 тултарнă, 13-шĕ 95 çулхи юбилейне паллă тунă. Пĕри вара кăçал 100 çула çитнĕ. 2013 çулта юбилей кĕрекине 74 çын ларнă.

Нумай пурăнакансем ытларах Туçа ял тăрăхĕнчен. Шăнкăртампа Аслă Арапуç ял тăрăхĕсем ку енĕпе – иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче. Вăрăм ĕмĕрлисем ытларах – хĕрарăмсем (88 процент). Сăмах май, Кивĕ Катекри Анастасия Михайловна Исаева кăçал 105 çул тултарнă. Лаша çулĕнче 87 çын ачи-пăчине, хурăнташ-тăванне юбилей кĕрекине пухĕ. 9 çын вара пĕр ĕмĕр пурăннине паллă тумалла. Апла, çирĕп сывлăх, вăй-хăват сунар вĕсене.

**С.ИВАНОВА.**

### Кĕнеке – чи лайăх парне

***Наци библиотекинче «Кĕнеке – алăран алла: пире тата пулас ăрусене» ыр кăмăллăх акцине пĕтĕмлетнĕ. Республикăн тĕп вулавăшне пурĕ 28440 кĕнеке-брошюра парнеленĕ.***

Ыр кăмăллăх хăйĕн вăйне çухатманни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Вулавăшсене кĕнеке парнелесси – питĕ лайăх пулăм. Шупашкарта та унашкал çын сахал мар-мĕн. Çакскерсем тĕрлĕ çулта кун çути курнă 5520 кăларăма вулакансем патне çитерме пулăшнă, çав шутра усă тӳпе айĕнчи вулав залне – 1631 экземпляр. Республикăри вулавăшсен фончĕ тата 17 пин кĕнекепе пуянланнă.

**Н.СМИРНОВА.**

### Людмила Григорьева – çулталăк пики



***Çĕнĕ çул умĕн Шупашкарти Ленин район администрацийĕн Çамрăксен правительстви йĕркеленипе «Юр Пике – 2013» конкурс иртнĕ. Унта аслă тата вăтам професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенче вĕренекен 9 студентка хутшăннă.***

Пикесем чи малтан хăйсемпе паллаштарнă, ăс-хакăл конкурсĕнче тупăшнă. Унтан вĕсем куракансен тимлĕхĕшĕн «кĕрешнĕ», вĕсене юрăташăпа савăнтарнă. Юлашкинчен «Юр Пике Олимпиадăна каять» театр уявĕ кăтартнă. Темиçе конкурс витĕр тухса «Юр пике – 2013» ята Шупашкарти электромеханика колледжĕнче ăс пухакан Людмила Григорьева çĕнсе илнĕ. Пĕлтĕр конкурсра виççĕмĕш вырăн йышăннă хĕр Вăрмар районĕнчи Шăхаль ялĕнче çуралса ӳснĕ, спортпа туслă, темиçе çул каялла каратэ енĕпе тĕнче чемпонки пулнă. II степень Диплома Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студентки Александра Бачурина тивĕçнĕ, виççĕмĕш вырăна Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче вĕренекен Ольга Краснова тухнă.

**А.ПЕТРОВ.**

### Ялта – юмах тĕнчи

***Хĕрлĕ Чутай районĕнчи кашни ял тăрăхĕ Çĕнĕ çула кĕтсе илме хатĕрленет. Кивĕ Атикассинчи культура çурчĕ умĕнчи тӳрем çак кунсенче юмахри сăнарсемпе пуянланчĕ.***

Капăр чăрăш ир те, каç та иртен-каяна савăнтарать. Кунтах – аслă Хĕл Мучипе Юр Пике, вĕсен тусĕсем – кĕçĕн Хĕл Мучисем. 2014 çул «хуçи» лаша çула тухма хатĕр. Иртнĕ Олимп элемĕ – упа, икĕ пингвин, икĕ матрӳшке. Ку çеç-и? Юр тăвайкки те тунă. Илемлĕ кӳлепесене ăсталаканĕсем – Ираида Аксакова библиотекарь, Галина Гордеевăпа Вячеслав Бармин культура ĕçченĕсем.

**Г.ЗОТОВА.**

*Канашлу*

## Кану, сиплев – пĕр çыхăра

***Раштавăн 25-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2012-2017 çулсенче ачасен интересĕсене хӳтĕлемелли наци стратегине пурнăçлас енĕпе ĕçлекен координаци канашĕн ларăвне ирттерчĕ. Кун йĕркинчи тĕп ыйтусем 2013 çулта çул çитменнисен канăвне, сиплевĕпе ĕçлевне йĕркеленин пĕтĕмлетĕвĕ тата килес çул ку енĕпе пурнăçламалли тĕллевсем пулчĕç.***

Кăçалхи канăвăн пĕтĕмĕшле ӳкерчĕкĕпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова паллаштарчĕ. Унăн сăмахĕпе, 2013 çулхи кану-сиплев кампанине республикăра 6-17 çулсенчи 111 пин ача хутшăннă /пĕлтĕрхинчен 3,5 процент ытларах/. Хула тулашĕнчи канупа сиплев 25 организацийĕнче 29 пин ача сывлăхне пиçĕхтернĕ /2012 çулпа танлаштарсан – 30 процент ытларах/. Çуллахи канăвăн тĕп тĕллевĕ сиплев тухăçлăхĕ пулнине палăртнă май Алла Владимировна ку енĕпе иртсе пыракан çул кăтартăвĕ унччĕнхинчен лайăхланнине çирĕплетрĕ: 92 процент. Ырă улшăну укçа-тенкĕ ытларах уйăрнипе те çыхăнни куç кĕрет: халĕччĕнхинчен 30 процент ытларах.

Çӳлерех асăннисем ача-пăча канăвĕ тĕлĕшпе татса паман ыйтусем пачах çук тенине пĕлтермеççĕ. Сывлăх сыхлавĕн министрĕ вĕсен шутне çаксене кĕртрĕ: персонала тĕплĕ суйласси тата смена йышăннă тĕле лагерьсене лайăх хатĕрлесси. Иккĕмĕш ыйту кăçалхи кампани вăхăтĕнче 3 организацире Роспотребнадзор ирĕк памасăрах сменăна уçнипе çыхăннă. «Чăн та, тĕрĕслев органĕ кăтартнă пур çитменлĕхе те вĕсем сирнĕ...» – терĕ А. Самойлова.

Федерацин этем ырлăхĕпе потребитель прависене хӳтĕлекен надзор службин Чăваш Енри управленийĕн ертӳçи Надежда Луговская санитари-эпидемиологи тĕлĕшĕнчен лагерьсенче лару-тăру лăпкă пулнине палăртрĕ. Çитменлĕхсене асăнчĕ те – иккĕмĕш тата ун хыççăнхи сменăсенче персонал йышĕ тивĕçлĕ шайра пулман иккен. Координаци канашĕн членĕсене шута илме ыйтрĕ: педагогсемпе вожатăйсене çеç мар, тĕрлĕ ыйтупа ĕçлекен специалистсене те тĕплĕнрех суйламалла. Калăпăр, поварсене. Ачасене кану вăхăтĕнче пахалăхлă апатпа тивĕçтермелле-çке. Лагерь ят-сумĕ çакăнпа питĕ тачă çыхăннă вĕт.

Республика ертӳçи ларура шухăша тата та тарăнлатрĕ: «Ачасем çитменлĕхсене аслисенчен кая мар лайăх асăрхаççĕ. Пепкине кану килĕшни е килĕшменни тăрăх ашшĕ-амăшĕ малашне хăйсене тивĕçтерекен лагерь шырĕ. Педагогсем пултаруллă, пурлăх никĕсĕ çирĕп пулсан ача лагерьти канупа кăмăлсăр юлмĕ». Михаил Васильевич тивĕçлĕ органсене организацисене укçа-тенкĕ хывассине çирĕп тĕрĕслеме хушрĕ.

ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов 2014 çул валли палăртнă тĕллевсене уçăмлатрĕ. Педагогсене хатĕрлессипе программа хута ямалла – кама май килнĕ çавна лагерьте ĕçлеттересси хыçа юлĕ. Ку енĕпе пăр тапраннă – министерство И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕпе килĕшӳ алă пуснă. Çакна тухăçлăрах йĕркелес тесен педагогсен шалу ыйтăвне те çĕклеме тивĕ. Министр лагерьсене кайма путевка ыйтса çырнисене шута илесси автоматизациленĕ тытăмпа пулса пырасса шантарчĕ. Заявка йышăнас тапхăр пуш уйăхĕнче старт илĕ.

**Ирина ИВАНОВА**

### Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4, каçхине 4 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 761 мм, сывлăшри нӳрĕк 89 процент.

**Кун тăршшĕ 6 сехет те 57 минут.**

*Аван-и, тăванăм?*

# ЧĂВАШ ТĔНЧИ

Хушма кăларăм

*Сăмах ăсти*

## Юррисене ял-йыш манмасть

### Пултараллă ентешĕмĕн сăввисемпе хаçат вулаканĕсене паллаштарассăм килет



Эпĕ ас тăвассах Иван Самаркин сăвăçа, кулăпа питлев ăстине ял-йыш Михайлов Иванĕ тетчĕ. /Унăн ашшĕ «р» сасса калайманнипе хушамачĕпе ятне улăштарнă/. Вăрçă пуçланнă çулах вăл вилни пирки хут килнĕ. Арăмĕ, Ăнă ял хĕрĕ Плаки, упăшки çапăçура пуç хунине пĕлсен икĕ ывăлĕпе ашшĕ-амăшĕн килне таврăннă. Пĕр ывăлĕ салтакра вилнĕ, ăна ял масарне пытарнă. Халĕ Ăнăра çывăх тăванĕ юлман. Çавăнпа та пирĕн паттăр çинчен, икĕ-виçĕ сăввисĕр пуçне, пĕлекенех çук.

Вăрçăччен çамрăксем чассах кӳршĕ ялсене концертсемпе, спектакльсемпе çӳренĕ. Пĕррехинче вĕсем Кушкуй ялне çитсен «Коммунар» колхоз председателĕ Евдоким Гусаров /Йĕкĕт, Ултук/ хăй çинчен юптаруçă концертра тăрăхласа ан калатăр тесе ăна килне чĕнсе аванах хăналанă. Апла пулин те поэт çакăн пек паллă çын çинчен сăвă каламасăр чăтайман:

*Журин Яковлич счетовод*
*Шут шăрçине хисеплет.*
*Председатель Гусаров*
*Аяк пĕрчине хисеплет.*

/Гусаров пĕр колхозникăн аяк пĕрчине çапса хуçнă пулнă. Ахальтен мар пуль-ха та.../

*Кушкуйĕнчи кăтрисем*
*Пурте Ултук ачисем...*

– тесе вĕçленĕ сатирик. «Ултукран ялта нумай хĕрарăм ача çуратнă» тенине хам та илткеленĕ.

Тепрехинче Хухла Унтрейĕ ĕçрен килне таврăннă чух Альтуç патне ампар хыçĕнчен Якку кĕрсе кайнине курнă, çакăн пирки ялти каччăсене каласа панă. Лешсем унта чупса кайнă, Якку мачча çинче мунча милĕкĕпе хупланса выртнине курнă. Çавăн хыççăн сăвă çуралнă:

*Улталаса каламастăп,*
*Якку тете, тупата,*
*Альтуç аппа вăл милкĕпе*
*Мĕнле кĕрĕ мунчана?*
*Якку выртать маччара;*
*Альтуç милки çап-çара!*

Тепĕр хайлавра сăмах виçĕ юлташ пурăш вырăнне пысăк шурă кăмпана пăшалтан персе салатни çинчен пынă:

*Иван, Пурхил, Прукуç;*
*Виçĕ çыннăн ултă куç!*
*Пурăш тесе кăмпана*
*Тĕшмĕртеймен куçĕсем...*
*Иван куçне шăлкаласа*
*Ларчĕ пурăш тĕллеме.*
*Пĕрре печĕ:*
*тӳнлеттерчĕ –*
*Пурăш вырăнтан сикмест.*
*Иккĕ печĕ: тӳслеттерчĕ –*
*Пурăш вырăнтах ларать.*
*Виççĕ печĕ:*
*кĕрслеттерчĕ –*
*Пурăш... чăл-пар!*
*саланать.*
*«Кăмпа-а-а-а!» – терĕ*
*Прукуç,*
*Виççĕшĕн вĕт – ултă*
*куç!..*

Иван Павловичăн «Эп те тыр выраттăм...» юррине халĕ те ялта юрлаççĕ.

*Кĕтӳç Мишка, патрак*
*Гришка,*
*Чухăн Ванька, средняк*
*Панька*
*Кĕчĕç колхоза.*
*Уй-хирĕсене,*
*çыранĕсене,*
*Лашисене, ĕнисене*
*Пачĕç колхоза.*
*Пурте пĕрле ĕçлес терĕç,*
*Кунне-çĕрне уйăрмарĕç*
*Ĕç вăхăтĕнче.*
*Ĕлĕк эп те тыр выраттăм,*
*Ылтăн кĕлтесем çыхаттăм*
*Пуян патĕнче.*
*Кун çути те*
*кăтартмастчĕç,*
*Хĕрарăма çĕр памастчĕç,*
*Хĕсĕкчĕ тĕнче.*
*Революци ирĕк пачĕ,*
*Капитала йăлт аркатрĕ*
*Тĕпĕ-йĕрĕпе.*
*Сухалать, кĕрлет ав*
*трактор,*
*Ĕç тăвать колхоз*
*«Прожектор»*
*Çĕньял хирĕнче.*

■ **Николай РОЗОВ, тавра пĕлӳçĕ.**
Чĕмпĕр хули – Çĕньял, Теччĕ районĕ, Тутарстан

## Хăш тымартан эпир тата ăçталла талпăнатпăр?

***Раштав уйăхĕн 14-мĕшĕнче Мускав хулин Тĕп администраци округĕн ача-пăчан 140-мĕш вулавăшĕнче А.П.Леонтьевпа Н.И.Егоровăн «Откуда мы, куда идем?» кĕнекинче хускатнă çивĕч ыйтусемпе «çавра сĕтел» иртнĕ. Ăна Чăваш Республикин Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представительстви Мускаври чăваш офицерĕсен «Тăван çĕр-шыв ывăлĕсем» юлташлăхĕпе пĕрле йĕркеленĕ.***

Хăнасемпе пухăннисене чи малтанах вулавăш ертӳçи Елена Ромодан саламланă тата ăнăçлă ĕçлемешкĕн ырă суннă. Мускав хулин ТАОн тĕп библиотека тытăмĕн генеральнăй директорĕ, чăвашсен паллă композиторĕн Филипп Лукинăн мăнукĕ Марианна Левитова палăртнă тăрăх – вулавăш залĕсенче кунашкал тĕл пулу малашне пĕрре кăна иртмĕ.



• *Марианна Левитова.*

Чăваш Республикин Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ Леонид Волков чăваш авторĕсен «Килĕштерсе ĕçлеме чĕнетпĕр», «Чăваш юмахĕсем», «Чăваш халăхĕн çутта кăларуçи И.Я.Яковлев», «Г.Айги. Сăвăсен пуххи» кĕнекисене библиотекăна асăнмалăх парнеленĕ. Марианна Левитова тата Елена Ромодан вулавăш фондне пуянлатнă хаклă произведенисемшĕн тав тунă.

«Çавра сĕтеле» Леонид Волков уçнă, вăлах ертсе пынă. «Манăн шухăшăмпа – паянхи тĕл-пулăва чăваш халăхĕн иртнĕ пурнăçĕпе, малашлăхĕпе, чăвашсен тата ытти халăхăн историйĕпе, хальхи шăпипе çыхăннă çивĕч ыйтусемпе, çавăн пекех вĕренӳпе, воспитани парассипе тата çутта кăларассипе чăннипех канăçсăрланакансем пухăннă. Халăхăн паянхи ăс-хакăлĕ пĕрешкел мар тăк тата унăн вăй-хăватне чăваш чĕлхи урлă кăна палăртма май килмесен – мĕн тумалла? Йăхташăмăрсен иртнĕ тапхăрти пурнăçĕпе малашлăхĕ, хăйĕн историллĕ йăх тымарĕ патне таврăнасси, чăваш чĕлхи, унăн пуянлăхĕ тата пĕлтерĕшĕ, иртнине чĕлхе урлă уçăмлатасси, этнос, нацилĕх, халăх кун-çулне хăй татса пани тата ытти пурне те интереслентерет», – палăртнă вăл.

«Çавра сĕтелĕн» модераторĕсем пулса кĕнеке авторĕсем – «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ, Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Алексей Леонтьев тата филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, тюрколог-лингвист, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн чĕлхе вĕрентĕвĕн уйрăмĕн ăслăлăх тĕп сотрудникĕ, Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Егоров профессор тухса калаçнă.

«Çавра сĕтеле» хутшăннисем хăнасен сăмахне итленĕ хыççăн хальхи Чăваш Ене халалланă курав фильмĕпе паллашнă, унтан кĕнекере хускатнă ыйтусене тĕплĕн сӳтсе явнă.

Дискуссие хутшăннисем этноса сыхласа хăвармашкăн кулленхи культура кирлĕлĕхĕ, халăх историйĕпе культурине тишкересси, вырăс халăх культурине реабилитацилесси, мĕн пур культура пултаруллă ĕçпе никĕсленни çинчен калаçнă. «Çавра сĕтелте» вăй илнĕ тĕп шухăш – тăван халăх культурине сыхласа хăварасси. Тĕрĕссипе, культура пултарулăх кăна мар, вăл – халăхăн пĕтĕмĕшле кун-çулĕ: хăйне еплерех тытни, пурнăç йăли-йĕрки, тĕрекĕ, шухăшлавĕ тата ытти те. Асăннă мероприяти 2014 çулта Раççейре Культура çулталăкĕ тесе палăртнă тапхăр умĕн иртнĕ май унта хускатнă ыйтусем татах та пĕлтерĕшлĕрех.

■ **Н.ВАСИЛЬЕВА**



• *Н.Егоров, Л.Волков, А.Леонтьев.*

## Пурте чипер, илемлĕ, пултараллă...

Раççейри чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсен ертӳçисем Хусанта пухăнса чăвашлăх ĕçĕнче çивĕч тăракан ыйтусене сӳтсе яврĕç. Вĕсенчен пĕри – йăхташсем йышлă пурăнакан регионсене чăвашла вĕренӳ кĕнекисемпе тата илемлĕ литературăпа тивĕçтересси. Тутарстанри, Эрĕнпур, Свердловск облаçĕсенчи йăхташăмăрсем тăван чĕлхепе вуласшăн, анчах юлашки çулсенче чăвашла кĕнекесем ку тăрăхсене питĕ сахал пыраççĕ. Тĕл пулăва хутшăннă ЧНК пĕрремĕш вице-президенчĕ В.Клементьев, А.Леонтьевпа К.Яковлев вице-президентсем çак ыйтăва Мăн Канаш ларăвĕнче пăхса тухассине пĕлтерчĕç.

Мероприяти тĕсăмĕ – Халăхсен туслăхĕн çуртĕнче иртнĕ VII «Тутарстан чăваш пики – 2013» илем тата пултарулăх конкурсĕ. Унта Тутар Республикинчи 11 район хĕрĕ тупăшрĕ. Çĕнтерӳçĕ «Раççей чăваш пики» конкурса хутшăнĕ.

Тутарстанра «Чăваш пики» проекта 2002 çулта йĕркеленĕ. «Общество ĕçне кӳлĕнсен организаци ĕçĕхĕлне аслă ӳсĕмрисем çеç хутшăннине асăрхарăм, – каласа кăтартрĕ конкурс директорĕ Светлана Чаркина. Çамрăксене мĕнле явăçтармалла-ха? Концертсемпе, спектакльсемпе илĕртеймĕн. Çав вăхăтра илем конкурсĕсем халăхра анлă сарăлнăччĕ, çавăн евĕрлĕ тупăшусем йĕркелес терĕмĕр. Проект хатĕрлерĕмĕр. Халĕ çирĕплетсех калама юрать: çамрăксем çак конкурса кăмăлласçĕ. Ялсенче хĕр ачасем пиллĕкмĕш класранах «Чăваш пикине» хутшăнма хатĕрленме пуçлаççĕ».

«Чăваш пики» илем конкурсĕ çеç мар, пултарулăх тупăшăвĕ те. Хĕрсем авалхи наци тумĕпе, хальхи вăхăтри кĕпепе паллаштараççĕ. Манăçа тухса пыракан апат-çимĕç хатĕрлеççĕ. Йĕркелӳçĕсем çапла майпа асанне-кукамайсен вăхăтĕнчи вăрттăнлăхсене хĕр пĕрчисем патне çитерме тăрăшаççĕ. «Чи пĕлтерĕшли акă мĕн: çакă пĕтĕмпех çамрăксене килĕшет. Вĕсем çултан çул ăсталăхне ӳстереççĕ, пултарулăхне аталантараççĕ», – тет Светлана Чаркина.

Мероприятие уçнă май конкурса хутшăнакансене /вĕсем 9-10 класра вĕренекенсем тата аслă шкулсен студенчĕсем/ Тутарстан халăхĕсен ассамблейин ĕçтăвком ертӳçи Н.Владимиров ырă сунчĕ. «Вун пĕрĕшĕ те питĕ чипер. Çак конкурса хутшăнниех вĕсем пурте çĕнтерӳçĕ пулнине çирĕплетет», – палăртрĕ вăл.

Хĕрсем чи малтан сцена çине наци тумĕпе тухрĕç, тăван чĕлхепе калаçрĕç. Унта жюри членĕсене хăйсем хатĕрленĕ апат-çимĕçе тутанса пăхма, хак пама сĕнчĕç. Пултарулăх ăмăртăвĕнче чăваш халăх, эстрада юррисене шăрантарчĕç, ташларĕç, сăвă каларĕç. Ăс-хакăл шайне тĕрĕсленĕ. Экзаменри пекех билет туртса тĕрлĕ ыйтăва хуравларĕç. Конкурс финалĕнче пикесем туй кĕпи тăхăнса тухрĕç. Залра ларакансене çакă уйрăмах килĕшрĕ.

Жюри пĕр саслăн Алексеев районĕн пики Мила Ильдуганова «Тутарстан чăваш пики – 2013» ята тивĕçлине пĕлтерчĕ. Чăваш пикине пуç кăшăлĕпе, ноутбукпа, ылтăнран тата хаклă чулсенчен хатĕрленĕ мăй çыххипе чысларĕç. Конкурса хутшăннă пĕр хĕр те парнесĕр юлмарĕ.

■ **И.ПЕТРОВА.**
Тутар Республики

## Çамрăк усламçăсем канашланă

Стамбулра чӳкĕн 25-30-мĕшĕсенче Тĕрĕк тĕнчин çамрăк усламçисен пĕрремĕш аслă пухăвĕ иртнĕ. Ăна Пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк çамрăкĕсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи Екрем Абдулаев /Азербайджан/ йĕркеленĕ.

Пухăва 23 çĕр-шывран 200 ытла делегат хутшăннă. Голланди, Венгри, Болгари, Румыни, Косово, Кипр, Греци, Турци, Азербайджан, Кăркăсстан, Казахстан, Туркменистан, Афганистан, Иракпа Иран, Сири, Раççей /Тува, Пушкăрт, Тутар, Дагестан, Калмăк, Чăваш Ен, Мари Эл, Коми Республики, Омск облаçĕ/ çамрăкĕсем пухăннă. Чăваш Республикин делегачĕсем – Олег Цыпленков тата ЧПУ экономика факультечĕн 3-мĕш курс студентки Анастасия Кузнецова. Настьăна Шупашкарти Суту-илӳпе промышленноç палати янă.

Аслă пухура курултай йĕркелеме йышăннă, унăн Уставне хатĕрленĕ.

■ **Н.ПЛОТНИКОВ**

*Аса илӳ*

## Савнă енĕм ĕмĕр асăмра

Тăвай сали /Янтиково, тутарсен «янтик» /тăвайкки/ сăмахĕнчен пулнă/ – халĕ район центрĕ – 1555 çулта пуçланса кайнă. Тăвай ту айĕнче ларать. Çуркунне, шалкăм çумăрсен вăхăтĕнче ăна шыв илнĕ. Пирĕн ял Сăхăтпуç Çăлпуç ялĕнчен уйрăлса тухнине палăртмалла. Çăлпуç ялĕ Тăвайĕнчен айлăмра, çырмара вырнаçнă. Çуркунне çынсене шыв илсе тертлентернĕ. Типĕ вырăн шыраса тарăн Сăхăт çырми урлă каçса Нишер кати енне куçнă. Ку тăрăхра йĕри-тавра çăлсем тапса тăраççĕ. Шывĕ таса, сивĕ. Сăхăт çырми Пуянкас вăрманĕнчен тытăнать те хальхи Сăхăтпуç ялĕ çумĕпе Тушкил еннелле тăсăлать. Шывĕ Кĕтнепе пĕрлешсе Сĕвене юхса кĕрет. Çырма хĕррисем чăнкă, хĕрлĕ тăмлă, ăшăх, сарлака мар. «Чăх та ишсе каçĕ», – теççĕ ун пирки хăшĕсем. Аслатиллĕ çумăрлă вăхăтра шыв вăйлă пăтранса юхать.

Тăвайĕнчен килекен чул сарнă аслă çул йывăç кĕпер урлă каçса Сăхăтпуçне çитнĕ. Йывăç кĕпер урлă тракторсем каçма пултарнă. Ăна хывнă чухне Тимофей Акимов свай айне пулса сарăмсăр вилнĕ. Василий Шашков, Николай Дмитриев, Виктор Родионов, Георгий Данилов платниксем те çак ĕçе хутшăннă.

2000 çулсенче çĕнĕ асфальт çул сарсан киввине пăрахăçланă, кĕпер ишĕлсе юхăннă. Çул çине сарнă чулсене çынсем киле валли чакаласа кăларнă, çурт никĕсне хума усă курнă. Сăхăтпуç таврашĕнчи çĕрсем тăмлă, пĕр кĕреçе чавсанах хĕрлĕ тăм тухать. Таврара çырма-çатра нумай. Пин-пин çул каялла кунта тискер кайăк пайтах пурăннă. Тавра пĕлӳçĕсем мамонт шăмми те тупнă.

Сăхăтпуç ялне икке пайлама пулать. Пĕри – Микки сăрчĕ, тепри – Малтикас урамĕ. Вĕсене Нишер шывĕ уйăрать. Микки сăрчĕ енчи урамсенче çăлсем тарăнах мар. Çӳлтикасри Шӳреке Никанурĕн çурчĕ умĕнче тем чухлĕ чавсан та шыв тĕлне çитеймĕн. Ăна тутарсене тара тытса алттарнă. Кайран хупланă. Кутăркасри Геннадий Храмов çурчĕпе юнашарах, Упашкан чăнкă çырми хĕрринчи /çӳллĕшĕ 20 метртан ытла пулас/, тарасаран ӳпĕнсех шыв ăсса илме пулать. Апла шыв çĕр айĕнче пĕр пек тапмасть. 2012 çулхи çуркунне ялти нӳхрепсенче шыв тулли тăнă. Кун пекки унччен нихăçан та пулман.

Çăлпуçсем Нишер çырмин çӳл енче ял пуçласа янă, Пионер ят панă. Кунта вĕсен масар та пулнă. Каярахпа ялтан аялараххи пĕчĕк вăрман урлă тепĕр ял никĕсленĕ. Ăна Красный Октябрь тенĕ. Революци çынсен шăпине палăрмаллах улăштарнă. Выселкăран, Пионертан çынсем майĕпен аялти яла куçнă. Çапла вара Сăхăтпуç пулса кайнă. Истори ăна Катек чăваш никĕсленине ĕнентерет. Ун пирки шкул музейĕнче вуласа пĕлме пулать. Сăхăтпуççем вилнĕ çынна малтан Тушкил ял масарне пытарнă. Каярахпа, Нишерпе Сăхăт шывĕсем пĕрлешнĕ тĕлте, шыв арманĕнчен çӳлерех сăрт хĕрринче çăва уçнă. Тем сăлтавпа ăна хупса çырма урлă тепĕр масар тунă. Хальхи масар – ял çывăхĕнчех.

Малтанхи шкул Кутăркас урамĕнчи тарăн Тетте çырми хĕрринче ларнă. Вăл кивелнĕ пулин те ял-йыш ăна çĕнĕ шкул тенĕ. Халĕ вăл çук ĕнтĕ. Çӳлтикасри икĕ хутлă кирпĕч шкулта вĕренеççĕ. Анчах вăл ачасем сахалтан тулли хăватпа ĕçлеймест. Вĕренекенсене Тушкиле ятарлă автобуспа илсе çӳреççĕ. Кутăркасри кивĕ, йывăç клубра Тушкил çынни Виктор Григорьев 5 пуспа кино кăтартатчĕ. Çулла – мотоциклпа, хĕлле лашапа çӳретчĕ вăл. Ял клубне 1963 çулта кирпĕчрен купаланă. Унăн умĕнче палăк салтак тăрать. Халĕ клуба пăснă, кăшкарĕ кăна юлнă. Анатолий Данилов трактор паркĕнчи генератортан каçпа вун пĕр сехетчен яла çутă парса тăнă. Çынсем краççын лампипе усă курнă. Краççына Нишер çырминче тимĕрçĕ лаççи пулнă вырăнта цистернăра упранă, кранне çăраççипе питĕрсе илнĕ. Ăна Мария тата Дина Головина сутуçăсем ял çыннисене сутнă. Пĕрремĕш лавкка йывăçран, пĕчĕкскер пулнă. Халĕ унăн вырăнĕ те паллă мар. Ялти фермăсене, трактор паркĕпе армана, хăма çуракан цеха тахçанах пăснă. Хуçалăх та юхăннă.

Мăн асаттене Чăрсăр Васлейĕ тесе чĕннĕ. Пĕлĕшсем ун çумне çак ята вăйлăран, усалран, çапăçма килĕштернĕрен «çыпăçтарнă». Çакăн йышшисен çурчĕ умне хура юпа лартнă теççĕ. Сăхăтпуç ялĕн укăлчинче те хура юпа пулни пирки калаççĕ. «Кунта усал çынсем пурăнаççĕ, çĕр выртма юлма юрамасть. Сыхлан!» – тенине пĕлтернĕ. Апла пулин те кил хуçисем хапхана çăрапа питĕрмен, урлă патак хурса хăварнипех çырлахнă. Пĕр-пĕрин япалине вăрламан, пĕр-пĕрне шаннă, эртелпе кал-кал ĕçленĕ. Йывăр, çитмен пурнăç çынсене ушкăна чăмăртанă.

Асатте, Даниил /Тальне/, 30-мĕш çулсенче утарта хуралçăра тăнă чухне пуçпа аптăраса сасартăк вилнĕ. Асанне, Анастасия Макаровна, Çĕнĕ Пуянкас ялĕнчен тухнă. Вăл иккĕ качча кайнă. Малтанхи упăшки питĕ кăра чунлă, усал пулнă, ним маршăн хĕнеме пултарнă. Чире кайса çамрăклах çĕре кĕнĕ. Асаннен унран Тарьепе Николай юлнă. Тарье Тушкилте пурăннă. Николай Тутарстанри Зеленодольск районĕнчи пĕр ялта кĕтес çавăрнă. Вĕсен шăпи пирки тĕплĕн пĕлместĕп.

Атте хыççăнхи, Николай, Венгрире халăх пăлхавĕ вăхăтĕнче çар тивĕçне пурнăçласа пуç хунă. Çар комиссариатĕнчен «персе вĕлернĕ» тесе пĕлтернĕ. Чысласа пытарнă самантра ӳкернĕ виçĕ сăн ӳкерчĕк сыхланса юлнă. Вил тăпри вырăнĕ паллă мар. Николая кăшт маларах яла вунă кунлăха канма янă. Вăхăчĕ тухсан вăл каялла каясшăн пулман. Çемьене намăс кăтартасран тата тĕрмене тытса хупасран шикленсе хайхискере улталаса ăсатнă. Эрех ĕçтерсе ӳсĕртнĕскере лаша урапи çине хунă, алли-урине çыхнă. Вунă çухрăмри Вăрмара илсе кайнă. Урăлсан татăлса йĕнине атте час-часах аса илетчĕ. Хăйĕн те куççулĕ тухатчĕ. «Вилессе чунĕ сиснĕ ахăр», – тетчĕ. Çын чунĕ инкеке туять иккен. Ун хыççăнхи, Анатолий, 1961 çулта Украинăна тухса кайнă. Унтах çĕре кĕнĕ. Çемйи халĕ те унтах пурăнать. Вĕсене эпĕ икĕ çул ширанă хыççăн тупрăм. Çыру çӳрететпĕр. Пĕр-пĕрне сăн ӳкерчĕк тăрăх çеç пĕлетпĕр.

Анне, Ольга Васильевна Васильева, Сăхăтпуçĕнчен сакăр çухрăмри Çĕнĕ Пуянкас ялĕнче Турат йăхĕнче 1925 çулта çуралнă. Вăл ашшĕнчен çамрăклах тăлăха юлнă. Амăшне 1936 çулта колхоз уйĕнчен кĕсйине тырă чиксе килнĕшĕн тĕрмене хупнă, унтах вилнĕ. Аннене килĕшме килсен арки çине кушак пырса ларнă иккен. «Нумай ача çуратаканскер пулать», – тенĕ Наçтаç асанне. Чăн та, вунă ачана кун çути кăтартнă вăл, амăшĕ-героиня ята тивĕçнĕ.

Аттене 1941 çулта ялти çамрăксемпе пĕрле Сучан-Владивосток енчи шахтăна çĕр кăмрăкĕ кăларма янă. Нумайăшĕ унтах вилнĕ. Атте тата Георгий Кошкин-Данилов çичĕ çултан тин яла ӳпке чирĕпе чирлесе килнĕ. «Киле кĕтĕм те – атте йывăç кашăкпа йывăç чашăкран яшка сыпса ларать. Хăлхи витĕрех марччĕ. «Ăçта сан ывăлу Иван?!» – тесе кăшкăратăп. «Э-э? Э-э, пĕлместĕп, пĕтрĕ пуль, хыпар та çук, çухалчĕ», – хуравлать мана. Хăй каллех яшкине сыпать. Ăçта васканă-ши? «Ара, эпĕ ку, сан ывăлу Иван!» – тетĕп ярт тăрса, хулĕнчен тĕкетĕп. Куçĕсене мĕлтлеттерет, чăл-чал пăхкалать, аран палласа илчĕ, йĕрсе ячĕ. Хам та йĕтĕм унпа пĕрле...» – аса илетчĕ атте.

Шахтăра ĕçленĕ, çимелли çитмен. Пĕррехинче çамрăксем ушкăнпа тайгана кедр мăйăрĕ пуçтарма кайнă. Ăна пасарта сутса çăкăр туяннă. Çанталăк самай сивĕтнĕ, кĕр енне кайнă. Пĕри, ывăнса çитнĕскер, тунката çине канма ларса юлнă. Кайран шăнса вилнĕскере тупнă. Тепрехинче вĕсем аташса кайса сĕм çĕрле салтаксем сыхлакан складсем патне пырса тухнă. «Стой, стрелять буду!» – кăшкăрнă хуралçă. Ачасем чăл-пар саланнă. Салтак автоматран пенĕ. Пĕр пульли аттен карттусне шăтарса тухнă, тăнлав çумĕнчи ӳтне чĕрсе илнĕ, тепри ывăç тупанне сăтăрса иртнĕ, виççĕмĕшĕ сылтăм кăкăр витĕр тухса çурăм тирĕ айĕнче чарăннă. Çамрăк тăнсăр пулса ӳкнĕ. Тăна кĕрсен çырмана шуса çитнĕ, шыв ĕçнĕ. Пульницăра чылайччен сипленнĕ. Нумай çул иртсен аттен çурăм тирĕ айĕнчи пуля хăй йывăрăшне пула майĕпен палăрмаллах анчĕ. Пĕчĕк мăкăль палăрса тăратчĕ.

Тепрехинче атте çăкăр черетĕнче тăнă. Вĕсене пĕр хутчен уйăхлăх талон панă. Ача йĕнине илтнĕ. Атте ăна шеллесе хăйĕн талонне панă. «Мана аса илет-ши хăть?» – тетчĕ вăл çав саманта аса илсе. – Лайăххи ырăпа çаврăнса çитет». Çакă пирĕншĕн тĕслĕх вырăннех пулнă. Ун чухне вăл выçăпа нуша тӳснине кам ăнланнă?

Вăрçă пĕтсен те вĕсене киле яман-ха. «Чукун çул хĕрринче ӳснĕ курăка çавапа çултаратчĕç, – аса илетчĕ. – Салтаксем вакунран çăкăр, консерва тата ытти çимĕç пăрахса паратчĕç. Савăнаттăмăрччĕ», – аса илетчĕ атте. Пĕррехинче вăл курăк ăшĕнче парашютпа пăрахса хăварнă радиоаппаратура тупнă. Ку тăшмансен аякран пĕлтерсе тăмалли хатĕр пулнă. Уншăн аттене «За отвагу» медаль пама йышăннă. Тĕрмере ларакансем аттене хăратса çĕр айĕпе чавса тунă шăтăкран склада вăрлама кĕртнĕ. Çавăншăн хăйне те хупса хумалла тунă. Унта нумай тытман ăна. Шахтăра ĕçлекен çитменрен кăларнă. Аттене чи тарăн вырăна янă. Çĕр ишĕлсе аннă. Çăлавçăсем çитиччен ушкăн виçĕ кун тĕттĕмре ларнă. Хăшĕ-пĕри ухмаха та тухнă иккен. Чăтайман этем...

Атте çар прокурорĕн ывăлне упа çăварĕнчен çăлнă. Утамана пуртăпа çапса вĕлерме ĕлкĕрнĕ. Çакăншăн прокурор тăрăшнипе аттене «статьясенчен» хăтарнă.

Алли питĕ ăстаччĕ. Ун пек чаплă тир тăвакан ялта пулман пулĕ. Тĕрлĕ çĕçĕ ăсталатчĕ. Хулăн пралукран ăлă вăйĕпе пружина явмалли механизм шухăшласа кăларнăччĕ. Урама ачасем валли тăваттăн ларса çаврăнмалли карусель лартнăччĕ. Çава туптатчĕ. «Çăпата хуçма хăнăхтармаллаччĕ те сана. Юрĕ ĕнтĕ, сирĕн ĕмĕрте кирлĕ пулмĕ», – тенĕччĕ пĕррехинче. Пăчкă хăйрама вĕрентнĕччĕ. Пире аттепе анне пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕ.

Анне краççын лампи умĕнче куçне хĕсе-хĕсе пире кĕнеке вуласа паратчĕ. Хурлăхлă вырăнсенче йĕретчĕ. Хăш чухне итлесе ларнă вăхăтрах çывăрса каяттăмăр. Вăл çип арланине сăнаса ларма юрататтăм. Хăй çиес апата пире панине те ас тăватăп. Пир тĕртекен стан хушшинче ларни халĕ те куç умĕнчех. Вăл тарасаран шыв ăсса килсен витрене тайăнтарса хĕрринчен шыв ĕçеттĕм. Ĕне сунă чухне сĕт чăрлатса витрене çапăннине епле манăн? Аннене кĕтсе чӳрече умĕнче тăнă самантсем те асрах. Юптарусене пăхмасăр калатчĕ. Çичĕ класс кăна вĕреннĕ вăл. Ăсра вăйлă шутлатчĕ. Çын нуши – унăн инкекĕччĕ. Хăть кама та пулăшма хатĕрччĕ.

...Пирĕн йăх йышлă, çынсен шучĕ виç çĕртен иртет. Вĕсем пурте тĕрлĕ шăпаллă.

■ **Лаврентий ДАНИЛОВ.**
Чĕмпĕр хули

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**

